## Тимлĕ, тăрăшуллă, тирпейлĕ çын

Филипп Миронович Лукинпа Республикăри музыка обществин пухăвĕнче паллашрăмăр.

— Сан сассуна радиопа час-часах итлетĕп, мĕнле ку таранччен те тĕл пулман-ха вара эпир? — тет Филипп Миронович.

— Сирĕнпе калаçма хăю çитереймен ĕнтĕ эпĕ, — тетĕп чаплă композитора. — Эсир Мускавăн-мĕнĕн кĕрлесе кăна тăратăр та, пырса калаçма та вăтантарать...

— Айта, Галина, çапла калаçса татăлар. Санăн сассу мана килĕшет. Эппин, сан малашне манăн юрăсене те юрламалла...

Паллах, ун юррисене юрларăм эпĕ, анчах эфир валли çырса хатĕрлеймерĕм. Вăл вара эпĕ юрланине, «Çăлкуç» халăх театрĕпе ĕçленине пĕлсе тăнă, Трактор тăвакансен завочĕн профкомĕнче мана хисеплĕ ят илме тăратасси пирки ыйту хускатнă.

Мĕн тери тимлĕ, тăрăшуллă, тирпейлĕ çынсем пулаççĕ тĕнчере...

*Галина Скворцова*,
ЧР культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ,
эстрада юрăçи.

Ялав, 2003. Утă уйăхĕ, 7 №.